Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

52 (7794) № * Юн кун, 2010 ҫулхи утӑ (июль) уйӑхӗн 7-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

**Ыран – Ҫемье, юрату тата шанчӑклӑх кунӗ**

### ХИСЕПЛӖ ЕНТЕШСЕМ!

Сире пурне те Ҫемье, юрату тата шанчӑклӑх кунӗ ячӗпе саламлатӑп.

Пирӗн ҫӗр-шывра ҫемье ыйтӑвне тӗпе хураҫҫӗ, унӑн пӗлтерӗшне пысӑка хурса хаклаҫҫӗ. Юлашки ҫулсенче ҫемьесене пулӑшас тесе патшалӑх шайӗнче туса ирттерекен ӗҫсем те ҫакна ҫирӗплетсе параҫҫӗ. Ку уява туса хуни те ҫакӑн ҫинчен калать.

Ҫемье, тӑван кил ӑшши пире ӗмӗр тӑршшӗпех вӑй-хӑват парса тӑрать. Кунтах ача пур енлӗн аталанса ӳсет, ырӑпа усала уйӑрма хӑнӑхать, ырӑ ӗҫсем тума, сын пулма вӗренет. Ҫавӑнпа та ашшӗ-амӑшӗн ачисем туслӑ ҫемьере ситӗнччӗр, вӗсем тӗрӗс воспитани илччӗр тесе тӑрӑшнине нимӗн те ҫитмест. Эсир пӗр-пӗринпе ырӑ чунлӑ пулнине, пӗр-пӗрне шаннине, пӗрле канашласа йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме ҫӑмӑлраххине ывӑл-хӗрӗсем курса-туйса ӳсеҫҫӗ, хӑйсем те кайран сирӗн пекех пулма тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫемьери юратупа килӗшӳ вӗсене пурнӑҫ ҫулӗпе тӗрӗс утма пулӑшаҫҫӗ. Кунта Павел апостол каланине илсе кӑтартни вырӑнлӑ пулӗ: юратакан сын чӑтӑмлӑ пулать, усал ӗҫ тумасть, ӑмсанмасть, тӗрӗсмарлӑха курса савӑнмасть, каҫарать, шанать, ӗненет, сынсене ырӑ сунать. Асрах тытасчӗ ҫакна.

Ҫак уява халалланӑ Петрпа Феврони Муромскисем пек ӗмӗр тӑршшӗпех таса та ырӑ чунлӑ пулмалла, пӗр-пӗрне чӗререн парӑнса, ӑнланса, пулӑшса, чӑн-чӑн таса юратупа пурӑнмалла пултӑрччӗ сирӗн. Сывлӑхӑр ҫирӗп, кун-ҫулӑр вӑрӑм пултӑр. Телей сирӗнтен айкинелле ан пӑрӑнтӑр. Чун ӑшши пурин валли те ҫиттӗр.

**Район пуҫлӑхӗ Ю. ИВАНОВ.**

### ХАКЛӐ ЕНТЕШӖМӖРСЕМ!

Сире Ҫемье, юрату тата шанчӑклӑх кунӗ ячӗпе саламлатӑп!

Ҫутӑ та илемлӗ ҫак уяв историйӗ тахҫанах пуҫланнӑ, йӑлисем ырӑ. Вӗсем чӑн тӗн сыннисене Петрпа Февронин ҫветтуйсене – ҫемьене, кил вучахне хӳтӗлекенсене – асра тытса, сума суса пурӑннипе сыхӑннӑ. «Ҫемйӗре лайӑх пӑхса усрӑр: ҫемье вӑл халӑх чаракӗ, патшалӑх чаракӗ. Ҫемье пурнӑҫӗ тӗлӗшпе ваттисем каланӑ сӑмаха чӑваш халӑхӗ ялан та хытӑ тытса тӑнӑ. Ҫак пурлӑха лайӑх сыхласа пурӑнӑр. Ҫемьен лӑпкӑ пӑрнаҫӗ пире пурнӑҫ хыттинчен хӳтелесе тӑрать. Килӗштерсе тӗреклӗ тӑракан ҫемьешӗн катаран килекен пурнӑҫ синкерӗсем хӑрушӑ мар. Ӳтӗре ясарпа ан варлӑр, ӳсӗртекен, астаракан япаларан шикленӗр. Ҫемйӗре сыхӑ усрасан, ачӑрсене чипер усраса пурӑнсан, килӗштерсе лӑпкӑ ӗҫлесе пурӑнма хӑвӑр валли тӗреклӗ чарак лартса хурӑр», – ҫапла палӑртнӑ чӑваш халӑхне панӑ Халалра пире Ҫутта кӑларакан Иван Яковлевич Яковлев.

Чӑваш Ен малашлӑхӗ, унӑн тикӗс аталанӑвӗ обществӑн чи теплӗ пайӗ – ҫемье – еплерех ҫирӗп пулнинчен килет. Республикӑра ҫемье, амӑшлӑхпа ачалӑх институтне ҫирӗплетес тӗллевпе нумай ӗҫлетпӗр: ҫамрӑксене патшалӑх енчен пулӑшмалли программа вӑйра, шкул ҫулӗчченхи вӗренӗвӗн пулӑшӑвӗсене ӳстерсе пыратпӑр, вӗренӳ сферинче пилот проекчӗсем пурнӑҫланаҫҫӗ. Ҫемье врачӗн офисӗсем, ҫӗнӗ, ятарлӑ медицина центрӗсем, телемедицина технологийӗсем пысӑк технологи пулӑшӑвӗ пама ҫул уҫаҫҫӗ. Тӗслӗх библиотекӑсем уснӑ, капӑр, бассейнсемлӗ спорт керменӗсем, хальхи вӑхӑтпа тан утакан шкулсем туса лартнӑ, социаллӑ пулӑшу учрежденийӗсен тытӑмне йӗркеленӗ. Вӗсем пуррипе ҫӗр-ҫӗр пин ҫемье тӗрлӗ енлӗ пулӑшу илет.

Республикӑра ҫулленех «Ҫулталӑк ҫемйи» конкурс тата ӗҫ династийӗсен слетне ирттересси йӑлана кӗчӗ. Нумаях пулмасть Чӑваш Енре патшалӑхӑн ҫӗнӗ наградине – «Юратупа шанчӑклӑхшӑн» орден – йӗркеленӗ. Ҫемьене, ҫемьен паха енӗсене ҫирӗплетессишӗн, ҫамрӑксене ыттисемшӗн тӑрӑшма, ӑнланма, хӗрхенме, тӳрӗлӗхе вӗрентессишӗн ҫине тӑракансене пурне те тав тӑватӑп.

Сире, хаклӑ ентешӗмӗрсем, ҫирӗп сывлӑх, хавхалану, ырӑ ӗҫӗрсенче ӑнӑҫу, пӗр-пӗрне ӑнланса пурӑнма, телейпе юрату сунатӑп!

**Чӑваш Республикин Президенчӗ Н. ФЕДОРОВ.**

## Йӗркелӗхшӗн тӑрӑшакансем

**Чӑваш милицийӗ – 90 ҫулта**



*90 ҫул каялла Чӑваш автономи облаҫне туса хурсанах июлӗн 6-мӗшӗнчен тытӑнса чӑваш милицийӗ те хӑйӗн истори страницисене ҫырма пуҫланӑ. Ҫакӑ обществӑри йӗркелӗх ыйтӑвӗ малта тӑнипе ҫыхӑннӑ пулнӑ ӗнтӗ. Пирӗн районта та ку ӗҫ ҫаплах пулса иртнӗ.*

Вӑхӑт иртет, анчах та шалти ӗҫсен пайӗ пур тапхӑрта та йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе ума лартнӑ тӗллевсене пурнӑҫласа пынӑ. Ку паян та ҫаплах. Ветерансем никӗсленӗ ырӑ йӑла-йӗркене малалла тӑсса тивӗҫе таса чун-чӗрепе пурнӑҫласси кашни сотрудникӑн тӗп вырӑнта пулмалла. Ҫакӑн ҫинчен каларӗ те районти шалти ӗҫсен пайӗн пуҫлӑхӗ Е.И. Плечов уяв мероприятийӗнче.

Иртнӗ шӑмат кун, июлӗн 3-мӗшӗнче, Муркашри Культура ҫуртне милици ӗҫченӗсем те (паллах, службӑран пушаннисем ҫеҫ), районти предприяти-организацисен ертӳҫисем те, чӗннӗ хӑнасем те йышлӑн пухӑнчӗҫ. Уяв чӑннипех те уяв пулчӗ темелле. Саламлӑ тата тав сӑмахӗ калас текенсем сцена ҫинче пӗр-пӗрне ылмаштарсах тӑчӗҫ. Акӑ район администрацийӗн пуҫлӑхӗпе Ю. Ивановпа унӑн ҫумӗ В. Калинин та пысӑк парнепех ҫитрӗҫ уява. Ытти хӑнасем те асӑнмалӑх хаклӑ парнесем парса саламларӗҫ районти шалти ӗҫсен пайне.

Чи пӑлханулла та кӗтнӗ самант вара милици ӗҫченӗсене тата йӗрке хуралҫисене кулленхи ӗҫре пулӑшса пыракансене асӑнмалӑх хаклӑ парнесем, Хисеп грамотисемпе Тав ҫырӑвӗсем, юбилей медалӗсемпе хавхалантару парнисем парса чыслани пулчӗ.

Акӑ районти шалти ӗҫсен пайӗн милицин участокри уполномоченнӑйӗсен уйрӑмӗн пуҫлӑхӗ Илья Иванович Петров та ятарлӑ парнепе юбилей медальне тивӗҫрӗ. Чӑваш Республикин шалти ӗҫсен министрӗн приказӗпе Николай Меркурьевич Цветкова – оперативлӑ дежурнӑя – «За верность долгу» паллӑпа наградӑларӗҫ, Вениамин Михайлович Максимовӑн – штаб пуҫлӑхӗн – ӗҫне Хисеп грамотипе палӑртрӗҫ **(сӑн ӳкерчӗкре сулахайран сылтӑмалла).**

Ветерансене уява йыхравлани, паллах, вӗсен сумлӑхӗпе ӗҫне паян та мала хунине калать. Чӑваш Республикин шалти ӗҫсен пайӗн ветерансен канашӗн ертӳҫи М.Ф. Киселев панӑ канашсем вара ҫамрӑк сотрудниксемшӗн уйрӑмах вырӑнлӑ пулчӗҫ.

Уяв мероприятине вӗҫленӗ май Евгений Иванович сӑмахӗсем темӗнле пулсан та ӗҫ ҫинех кусрӗҫ. Мӗнех, ӗҫӗ ҫаплараx вӗсен – йӗрке хуралҫисен: уяв саманчӗсем кӗске. Кӑҫалхи ҫур ҫулта районти шалти ӗҫсен пайӗ хӑйӗн тӗллевӗсене еплерех пурнӑҫлани тата йӗрке тӗлӗшпе районта мӗнлерех ларутӑру пулни ҫинчен ҫитес номерте паллашма пултаратӑр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Чрезвычайлӑ лару-тӑру

**Республикӑра**

**Июлӗн 2-мӗшӗнче Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗ республикӑри районсен территорийӗсенче 2010 ҫулхи июлӗн 3-мӗшӗнчен тытӑнса чрезвычайлӑ лару-тӑру режимне ӗҫе кӗртесси пирки йышӑну тунӑ. Иртнӗ хӗл кунӗсенче юр ҫуманнипе тата ҫанталӑк сивӗ тӑнипе кӗрхи ял хуҫалӑх культурисен 64 проценчӗ пӗтнӗ. Ҫу кунӗсенче ҫанталӑк шӑрӑх тӑнӑ май ял хуҫалӑхӗнче критикӑлла лару-тӑру туса хучӗ. Метеоцентр пӗлтернӗ тӑрӑх, тӑпрари нӳрӗк шайӗ критикӑлла лару-тӑру шайне ситрӗ – 20 процентран та иртмест.**

**Малтан шутласа палӑртнӑ тӑрӑх, 2010 ҫулта кӑна гидрометеорологи условийӗсене пула ял хуҫалӑх продукцине туса хатӗрлекенсене тата агропромышленность комплексӗн организацийӗсене кӳнӗ тӑкак 5,7 миллиард тенкӗпе танлашать. Кун пек лару-тӑру 2011 ҫулта та пӑларӗ. Ака ӗҫӗсене ирттерме вӑрлӑх, выльӑхсене усрама апат ҫителӗклӗ пулмӗ.**

**(Вӗҫӗ 4-мӗш стр.).**

**Симӗс ӗҫ ҫи**

## Паянхи тӗллев – выльӑх апачӗ хатӗрлесси

Районти хуҫалӑхсенче курӑксене ҫулса утӑ хатӗрлес ӗҫсем сарӑлнӑ. Ӗнерхи кун тӗлне нумай ҫул ӳсекен курӑксене 5248 гектар ҫинче (54,2 процент) ҫулма ӗлкӗрнӗ.

Хатӗрлесе хӑварнӑ утӑ 4201 тоннӑпа танлашать. Ку вӑл планпа пӑхнин 81,4 проценчӗ чухлӗ пулать. «Передовик», Чкалов ячӗпе хисепленекен хуҫалӑхсем утӑ янтӑлассипе плансене 120–124 процент тултарнӑ.

Сенаж пӗтӗмпе 3800 тонна (44,8 процент) хывса хӑварнӑ. «Восток» хуҫалӑхра ку енӗпе плана 113,5 процент, «Передовик» хуҫалӑхра 296 процент тултарнӑ.

Ильич ячӗпе хисепленекен хуҫалӑхра 1670 тонна, Ленин ячӗпе хисепленекен хуҫалӑхра 500 тонна силос хывса хӑварнӑ.

**ҪЫРӐНТАРУ**

**Хаклӑ вулакансем!**

**Райхаҫата августран илсе тӑма ҫырӑнтарас тапхӑр пырать. Паян-ыранах почтальонсемпе тӗл пулма тӑрӑшӑр!**

ГОСТ 530-2007
ПОЛНОТЕЛЫЙ КЕРАМИЧЕСКИЙ
КИРПИЧ
ЧЗСМ
ВОЗМОЖНА ДОСТАВКА
М-100....от 4,99 руб
М-125....от 5,20 руб
М-150....от 6,90 руб
акция действует с 01 по 31 июля 2010г. цены указаны за наличный расчет
ЧР г. Чебоксары, ул. К.Иванова 80А
тел: (8352) 58-35-13, 58-63-71, 58-35-05
www.21chzsm.ru chzsm@orionet.ru

### «Единая Россия» партин Муркаш районӗнчи уйрӑмӗн обществӑлла йышӑну пӳлӗмӗнче граждансене йышӑнаҫҫӗ

**Июлӗн 9-мӗшӗнче** – Игорь Васильевич НИКОЛАЕВ, политканаш членӗ, депутатсен районти Пухӑвӗн председателӗ, Ильич ячӗпе хисепленекен хуҫалӑх ертӳҫи.

**Июлӗн 13-мӗшӗнче** – Владислав Григорьевич ДАНИЛОВ, политканаш членӗ, Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн депутачӗ, районти тӗп больницӑн тӗп врачӗ.

Йышӑну вӑхӑчӗ 13 сехетрен тытӑнса 15 сехетчен.

**Саламлатпӑр**



Юратнӑ мӑшӑра, ӑш пиллӗ аттене, ырӑ кӑмӑллӑ кукаҫие, хисеплӗ хӑтана – Ҫармӑскасси ялӗнче пурӑнакан **Валериан Александрович МАТВЕЕВА** юбилей ячӗпе ӑшшӑн саламлатпӑр, ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм кун-ҫул, ырлӑх, телей сунатпӑр. Ҫемьере юрату, ӑнлану, кӑмӑллӑх пултӑр. Ачусемпе мӑнукусемпе савӑнса пурӑн. Ватлӑху чыслӑ та хисеплӗ пултӑр.

**Саламлапа мӑшӑрӗ, ывӑлӗсем, хӗрӗсем, кинӗ, кӗрӳшӗ, хӑтисемпе тӑхлачисем, ял ҫыннисем.**

# Виçĕ уйăх кăна юлать

## Суйлав ыйтăвĕсемпе

***Кăçалхи октябрь уйăхĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ мероприятисемпе пуян. Октябрĕн 14–25-мĕшĕсенче Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕ иртмеллипе пĕрлех çак уйăхăн иккĕмĕш вырсарни кунĕнче – октябрĕн 10-мĕшĕнче – вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен представителĕсен суйлавĕ пулĕ. Унччен вара вăхăт нумаях юлмасть. Çавна май район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕпе Лилия Юрьевна ТАРАСОВĂПА тĕл пулса суйлава хатĕрленес ыйтусемпе кăсăклантăм.***

**– Лилия Юрьевна, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен çитес суйлавне хатĕрленес ĕçсене мĕнле хак пана пулăттăр? Мĕн-мĕн туса ирттернĕ çак вăхăта?**

– Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен суйлавне «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации» Федераллă саккунпа тата Чăваш Республикин «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике» Саккунĕпе килĕшӳллĕн ирттереççĕ. Депутатсен районти Пухăвĕн тата депутатсен ял тăрăхĕсенчи Пухăвĕсен йышăнăвĕсемпе килĕшӳллĕн депутатсене суйлассипе суйлав округĕсен схемисене палăртса хунă. Июлĕн 11–21-мĕшĕсенче халăх суйлакан органсен йышăнăвĕсемпе суйлав ирттересси пирки палăртĕç.

**– Камсене-камсене суйлăпăр-ха çитес суйлавра? Урăхла каласан, суйлавçăна алла миçе бюллетень парĕç?**

– 2010 çулхи октябрь уйăхĕнче пирĕн вăрттăн сасăласа ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсене тата депутатсен ял тăрăхĕсенчи Пухăвĕсен депутачĕсене суйламалла пулать.

**– Кандидатсем тăратас ĕç мĕнле пырать-ха? Кандидатсене партисенчен кăна тăратаççĕ-и е уйрăм çынсем хăйсем те хăйсен кандидатурисене сĕнме пултараççĕ?**

– Кандидатсене тăратас ĕç суйлав ирттересси пирки официаллă документ пичетленсе тухнă кунран тытăнать те суйлавччен 40 кун маларах вĕçленет. Суйлав пĕрлешĕвĕсен кандидатсем тăратма право пур. Çавăн пекех саккунпа килĕшӳллĕн çынсем хăйсем те хăйсен кандидатурисене сĕнме пултараççĕ.

Пĕр мандатлă суйлав округĕнче суйлав пĕрлешĕвĕ пĕр кандидат кăна сĕнме пултарать. Политика партийĕсем кандидатсене «Политика партийĕсем çинчен» Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн регионсенчи тата вырăнсенчи уйрăмсен конференцийĕсенче вăрттăн сасăласа тăратаççĕ.

Çынсем хăйсен кандидатурисене хăйсем тăратнă чухне кун пирки территори суйлав комиссине пĕлтерме тивĕç. Кунпа пĕрлех кандидатшăн алă пуснисене пуçтармалла. Алă пуснисене пухмалли хутсене саккунпа килĕшӳллĕн туса хатĕрленĕ. Кандидата регистрацилеме округ территорийĕнче регистрациленĕ суйлавçăсен 1 процентĕнчен кая мар (депутат кандидачĕ валли) алă пусни кирлĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пулма кандидата регистрацилеме кунти ял тăрăхĕнчи суйлавçăсен 1 процентĕнчен кая мар алă пусмалла. Пур кандидатсен те прависем пĕр пек тата вĕсен тивĕçĕ те пĕр пекех. Кандидатсен ячĕпе вĕсен тивĕçĕсене пурнăçлама уполномоченнăй представительсем тата шаннă çыннисем пулма пултараççĕ.

Муркаш районĕнче вырăнти самоуправлени органĕсен суйлавне ирттерессипе районти территори суйлав комиссийĕ ĕçлет. Халăх суйлакан органсем – депутатсен Пухăвĕсем ыйтнипе Чăваш Республикинчи Тĕп суйлав комиссийĕн йышăнăвĕпе муниципаллă суйлав комиссийĕсен тивĕçĕсене пурнăçлассине Муркаш районĕнчи территори суйлав комиссийĕ çине хунă. Вăлах округсенчи суйлав комиссийĕсен полномочийĕсене те пурнăçлать (25 – депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсене суйлассипе, 185 – депутатсен ял тăрăхĕсенчи Пухăвĕсен депутачĕсене суйлассипе, 16 – ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене суйлассипе).

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен суйлавне хатĕрленсе ирттерессипе территори суйлав комиссийĕ хăйĕн ĕç планне туса хатĕрлесе çирĕплетнĕ ĕнтĕ. Комисси суйлав кампанийĕ епле пыни, суйлав ĕçĕ-хĕлĕ, кандидатсем, суйлав пĕрлешĕвĕсем пирки пĕлтерсех тăрĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

# Мы ждем вас в ПКД

## Почта развивается




Министерством связи и массовых коммуникаций РФ был запущен проект «КиберПочт@», официально начатый 1 августа 2001 года и направленный на преодоление информационного неравенства в России. Основная задача проекта – предоставить возможность гражданам всех регионов и удаленных уголков страны получить навыки работы на персональном компьютере и доступ во всемирную сеть Интернет с использованием пунктов коллективного доступа. В связи с реализацией этой программы ФГУП «Почта России» на территории Моргаушского и Ядринского районов открыл 35 пунктов коллективного доступа в Интернет. На территории Хорнойского и Кильдишевского сельских поселений не функционируют отделения почтовой связи, но несмотря на это на территориях вышеуказанных сельских поселений тоже работают пункты коллективного доступа ФГУП «Почта России». Не везде они пока пользуются одинаковым спросом. Может действительно от того, что мы плохо рекламируем их работу, услуги, оказываемые ими. Наиболее эффективно используются пункты коллективного доступа в ОПС Моргауши, Васькино, Одаркино, Ядрин, Чебаково, М. Карачкино, в ПКД Хорнойского сельского поселения.

Пункт коллективного доступа в Интернет (ПКД) – это одно или несколько рабочих мест в отделениях почтовой связи, оборудованных персональными компьютерами, подключенными к сети Интернет.

На сегодняшний день в рамках проекта «КиберПочта» каждый ПКД оснащается стандартным комплектом оборудования и стандартным программным обеспечением. Благодаря данной услуге через ПКД, возможно развитие такой социально значимой сферы, как заочное дистанционное образование с возможностью получения консультаций, учебных материалов и сдачи промежуточных тестов в ПКД, аттестационных экзаменов. Это поставит молодежь удаленных уголков страны в равные условия с жителями больших городов в плане получения высшего образования. Через ПКД обеспечивается доступ россиян к справочно-правовым системам, что позволяет в значительной степени решить проблему преодоления правовой неграмотности населения России и ускоряет переход России к гражданскому обществу. Возможность обращения через ПКД к общероссийским базам данных товаров и услуг, возможность получить в отделении почтовой связи комплекс всех услуг, связанных с доставкой заказанных товаров на дом, позволяет повысить жизненный уровень каждого жителя России, в т.ч. и удаленных от центра регионов. Не менее важное в социальном плане направление – поиск работы и трудоустройство через Интернет. Безусловно, значение ПКД будет расти, набор услуг существенно расширится, а сами они будут качественно совершенствоваться с тем, чтобы отвечать всем возрастающим требованиям клиентов. Таким образом, Почта России решает одну из главных задач программы инфотелекоммуникационной политики сегодня - преодоление «информационного неравенства» между жителями разных регионов.

Режим работы пунктов коллективного доступа соответствуют режиму работы отделений почтовой связи: со вторника по субботу с $8^{00}$ до $17^{00}$, обеденный перерыв с $13^{00}$ до $14^{00}$.

**Услуги, предоставляемые в рамках проекта КиберПочта:**

Доступ в Интернет

• предоставление доступа к бесплатным Интернет-ресурсам

• предоставление регламентируемого доступа к Интернет-ресурсам партнеров Почты России (обращение к информационно-правовым системам, ресурсам дистанционного обучения, базам данных кадровых агентств и служб занятости, клубов знакомств, Интернет-магазинов)

Пользование персональным компьютером (ПК)

• предоставление доступа к использованию стандартных программ, установленных на ПК, без выхода в Интернет

• работа с внешними электронными носителями (CD, DVD, дискет, и проч.)

• черно-белая распечатка текстов, изображений

• набор текста на клавиатуре с помощью оператора

**Сопутствующие услуги**

• информационно-образовательные услуги, в т.ч. консультирование по вопросам работы на ПК и работе различных программ, вопросам использования возможностей Интернета, по другим видам услуг, оказываемых на ПКД.

Уважаемые жители Моргаушского и Ядринского районов, посещайте наши пункты коллективного доступа, Мы будем рады Вас обслужить.

**Оператор связи КОРНИЛОВ И.Н.**
**Ведущий инженер СТАРЦЕВ А.Ю.**

## ОАО «ГАЗПРОМ» ФИЛИАЛ ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород»

# ЧЕБОКСАРСКОЕ ЛИНЕЙНОЕ ПРОИЗВОДСТВЕННОЕ УПРАВЛЕНИЕ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ. УВЕДОМЛЕНИЕ

ЧЕБОКСАРСКОЕ ЛИНЕЙНОЕ ПРОИЗВОДСТВЕННОЕ УПРАВЛЕНИЕ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ УВЕДОМЛЯЕТ юридических и физических лиц, владеющих и обрабатывающих землю или (и) производящих работы в Моргаушском районе Чувашской Республики, что на территории Моргаушского района находятся магистральные газопроводы (МГ) и газопроводы-отводы (далее по тексту - газопроводы), эксплуатируемые под рабочим давлением до 75 кг/см². Глубина залегания газопроводов (от верхней поверхности трубопроводов) составляет не мене 0,8 метров.

«Правилами охраны магистральных трубопроводов», утв. ГГТН РФ 24.04.92г. (внесены дополнения 23.11.94 г), в целях обеспечения нормальных условий эксплуатации и исключения возможности повреждения газопроводов устанавливаются охранные зоны по 25 м в обе стороны от оси любого газопровода.

Минимальное расстояние от газопроводов до объектов различного назначения установлено на основании СНиП 2.05.06-85* и для находящихся на территории района газопроводов составляет от 100 метров до 350 метров.

В охранных зонах газопроводов запрещается производить всякого рода действия, могущие нарушить нормальную эксплуатацию трубопроводов, либо привести к их повреждению, в частности:

а) перемещать, засыпать и ломать опознавательные и сигнальные знаки, контрольно - измерительные пункты;

б) открывать люки, калитки и двери необслуживаемых усилительных пунктов кабельной связи, ограждений узлов линейной арматуры, станций катодной и дренажной защиты, линейных и смотровых колодцев и других линейных устройств, открывать и закрывать краны и задвижки, отключать или включать средства связи, энергоснабжения и телемеханики трубопроводов;

в) устраивать всякого рода свалки, выливать растворы кислот, солей и щелочей;

г) разрушать берегоукрепительные сооружения, водопропускные устройства, земляные и иные сооружения (устройства), предохраняющие трубопроводы от разрушения, а прилегающую территорию и окружающую местность - от аварийного разлива транспортируемой продукции;

д) бросать якоря, проходить с отданными якорями, цепями, лотами, волокушами и тралами, производить дноуглубительные и землечерпальные работы;

е) разводить огонь и размещать какие-либо открытые или закрытые источники огня.

В охранных зонах трубопроводов без письменного разрешения предприятий трубопроводного транспорта запрещается:

а) высаживать деревья и кустарники всех видов, складировать корма, удобрения, материалы, сено и солому, располагать коновязи, содержать скот, выделять рыбопромысловые участки, производить добычу рыбы, а также водных животных и растений, устраивать водопои, производить колку и заготовку льда;

б) сооружать проезды и переезды через трассы трубопроводов, устраивать стоянки автомобильного транспорта, тракторов и механизмов, размещать сады и огороды;

в) производить мелиоративные земляные работы, сооружать оросительные и осушительные системы;

г) производить всякого рода открытые и подземные, горные, строительные, монтажные и взрывные работы, планировку грунта.

Письменное разрешение на производство взрывных работ в охранных зонах трубопроводов выдается только после представления предприятием, производящим эти работы, соответствующих материалов, предусмотренных действующими Едиными правилами безопасности при взрывных работах;

д) производить геолого-съемочные, геолого-разведочные, поисковые, геодезические и другие изыскательские работы, связанные с устройством скважин, шурфов и взятием проб грунта (кроме почвенных образцов).

Владельцы земельных участков не могут строить какие бы то ни было здания, строения, сооружения в пределах установленных минимальных расстояний до объектов системы газоснабжения; такие владельцы не имеют права чинить препятствия организации - собственнику системы газоснабжения или уполномоченной ею организации в выполнении ими работ по обслуживанию и ремонту объектов системы газоснабжения, ликвидации последствий возникших на них аварий, катастроф. (ФЗ от 31.03.1999 г. № 69-ФЗ «О газоснабжении в РФ»).

Органы исполнительной власти и должностные лица, граждане, виновные в нарушении правил охраны магистральных трубопроводов, газораспределительных сетей и других объектов систем газоснабжения, строительстве зданий, строений и сооружений без соблюдения безопасных расстояний до объектов систем газоснабжения или в умышленном блокировании либо повреждении, иных нарушающих бесперебойную и безопасную работу объектов систем газоснабжения незаконных действиях, несут ответственность в соответствии с законодательством Российской Федерации.

Здания, строения и сооружения, построенные ближе установленных строительными нормами и правилами минимальных расстояний до объектов систем газоснабжения, подлежат сносу за счёт средств лиц допустивших нарушения.

Материальный ущерб, нанесённый организации – собственнику системы газоснабжения в результате умышленного её блокирования или повреждения либо иных нарушающих бесперебойную и безопасную работу объектов систем газоснабжения незаконных действий, возмещается в установленном порядке виновными лицами или принявшими противоправные решения лицами.

При рассмотрении соответствующими органами ходатайства о предоставлении земельных участков для указанных целей место расположения объектов строительства должно предварительно согласоваться с ЛПУМГ. Перед началом работ необходимо получить письменное разрешение Чебоксарского ЛПУМГ на производство работ в охранной зоне магистрального трубопровода. Производство работ без разрешения или по разрешению, срок действия которого истек, ЗАПРЕЩАЕТСЯ.

Получив разрешение на производство работ в охранной зоне магистрального трубопровода, необходимо до начала работ вызвать представителя Чебоксарского ЛПУМГ для установления точного местонахождения трубопровода, определения его технического состояния и взаиморасположения с сооружениями проектируемого (строящегося) объекта. В процессе строительства необходимо письменно за 5 суток до начала уведомить Чебоксарское ЛПУМГ о времени производства тех этапов работ, специально указанных в выданном разрешении при которых необходимо присутствие представителя Чебоксарского ЛПУМГ.

По всем вопросам, относительно производства земляных работ в зонах газопроводов, обращаться по адресу:

429620, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 25, Филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» – Чебоксарское ЛПУМГ, тел.: 8-(835) - 30-54-09, 30-54-22.

## Йăла-йĕрке

# Ятмансем ял уявĕнче савăнчĕç

***Архиври хутсем çирĕплетнĕ тăрăх Ятман (ун чух Хуракасси) 1473 çулта пуçланса кайнă. Монгол тутарсем тапăнса çаратма пуçласан ислам тĕнчине йышăнман пăлхарсем хальхи Чăваш çĕр-шывне куçса килнĕ. Çак хура пăлхарсем Хуракасси ялне пуçарса яракансем пулнă та. Пурăна киле ялта йыш хушăнсах пынă. Çĕр сахал пирки 1437 çулта Хуракассисем Тутаркассинчи (хальхи Атапай ялĕ) Кудайберда мăрсаран 7 ятак çĕр туяннă. Уншăн Хуракасси çынни Котма Саппи 18 пăт пыл тата 50 пус укçан тӳленĕ.***

Пуçласа эпир ял уявне иртнĕ çул ялти клуба тунăранпа (ăна колхоз вăййĕпе лартнă) 50 çул çитнине халалласа ирттертĕмĕр. Клубăн ун чухнехи ертӳçи К.А. Шатунова та пирĕн пуçарăва ырларĕ, хăй те çак ĕçе хастар хутшăнчĕ.

Çамрăксем валли тенĕнех иртнĕ пурнăçпа паллаштаракан фотостенд йĕркелерĕмĕр. Интереслĕ сăн ӳкерчĕксене килĕрен пуçтартăмăр. Ал ĕç ăстисем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç. Людмила Никифорова тĕрлеме маттур пулнипе пурне те тĕлĕнтерчĕ.

Пĕрремĕш ял уявĕ пурне те килĕшнĕрен кăçал та ăна йĕркелес терĕмĕр. Ял старости В.К. Иванов, РФ Патшалăх Думин депутачĕн пулăшаканĕ А.Н. Иванов тата спонсорсем пулăшнипе килĕшӳллĕ уяв пулчĕ.

Клуб çумĕнчи художество пултарулăх коллективĕн концерчĕпе уçăлчĕ уяв. Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю.А. Кожевников ял-йыша саламларĕ. Отечественнăй вăрçăра çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн пирĕн ялти 66 çын пуçĕсене хунă. Вĕсене сума суса Муркашри Людмила Семеновна Игнатьева ятарлă концерт кăтартрĕ.

Ял ĕçчен те хастар çыннисемпе илемлĕ. Пилĕк ача ӳстерекен Валентинăпа Игорь Лебедевсем, Ираидăпа Владимир Дедовсем, кĕмĕл туй уявлакан Раисăпа Владимир Никифоровсем парнесене, ăшă сăмахсене тивĕçрĕç.

Ял çыннисем спорт вăййисене те хутшăнчĕç. Шӳрпе пĕçерсе те çирĕмĕр. Хыççăн Чăваш халăх артистки Людмила Семенова концертне пăхса савăнтăмăр.

Ятман ялĕ малашлăха пăхать. Пĕлтĕрпе кăçал çуралнă ултă ачана, вĕсен ашшĕ-амăшне те парне парса чысларăмăр.

Çĕрле тахçантанпах кĕтнĕ çумăр çуса пани Ятмансене пушшех хĕпĕртеттерчĕ.

**Р. ИВАНОВА, Ятман ялĕнчи клуб ертӳçи.**

манăн санăн пирĕн **Çемье** ĕнер паян ыран



**Ыран – Пĕтĕм Раççейри çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ**

## Пирĕн уяв




Июлĕн 8-мĕшне (кивĕ стильпе – июнĕн 25-мĕшне) Раççейре пурăнакансем кăçалхипе виççĕмĕш çул ĕнтĕ Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ тесе уявлаççĕ. Çакă питĕ тĕрĕс: пире, православи тĕнне ĕненекенсене, таçти инçетри католиксен çветтуй Валентин кунне уявлани килĕшсех те каймасть çав.

Мĕнле калаççĕ: малтанхине пĕлмесĕр малашлăх çук, теççĕ мар-и-ха? Апла пулсан çак илемлĕ уява Раççейре 200 çул каяллах паллă тунине те пĕлмелле пирĕн, вăл пирĕншĕн пысăк уяв, пĕлтерĕшлĕ кун пулнине те шута илмелле. Çак уяв сăваплă Петĕрпе Февроени ячĕсемпе çыхăннă, вĕсен юратăвĕпе тата шанчăклăхĕпе. Çавăнпа та уяв кунĕнче хăвăр çемьерисене, тăвансемпе юлташсене саламлама ан манăр.

## Телейлĕ ачалăха упрăр!

Пепке çурални кашни ашшĕ-амăшĕшĕн питĕ пысăк савăнăç. Çак саманта нумайăшĕ чăтăмсăр кĕтет. Анчах хăш-пĕр ача çывăх çыннисен ăшшине туяймасть çав. Çакăн сăлтавĕсем вара тĕрлĕрен: пĕри килте «кĕтмен ача» пулнă, теприн ашшĕ-амăшĕ эрехпе айкашать, виççĕмĕшĕ тăлăха тăрса юлать...

Муркашри тĕп больницăра ача-пăчан реабилитаци палати пур. Паянхи куна унта пĕр ачана вырнаçтарнă. Çӳлерех калана тăрăх çак палатăна йывăр çемьесенче ӳсекен, ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлакан ачасене вăхăтлăх яраççĕ. Çак ача та ăна валли çĕнĕ çемье е ашшĕ-амăшĕ майлашăнса çитиччен палатăрах юлать. Палатăна лекекен кашни ача тарăн медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухать.

– Кăçалхи çула илсен паянхи кунччен 31 ача çак палатăра пулса курчĕ, – терĕ Ираида Семеновна Кабуркина, район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн тĕп специалист эксперчĕ. – Шел пулин те, иккĕмĕш хут килеkennисем те пур. Районта 74 ачана опекунлăха илнĕ, 16-ăн çĕнĕ çемьере çитĕнеççĕ, 11-шĕ усрав-çемьесенче пурăнаççĕ.

Çаксем хăрушă цифрăсем мар-и?.. Ашшĕ-амăшĕ! Ачасем – сирĕн пуласлăх, несĕле малалла тăсакансем. Сирĕн вĕсен сывлăхĕшĕн, кун-çулĕшĕн, телейĕшĕн ответлă пулмалла. Йĕркесĕр пурăниччен пепкӳсене хăвăрăн ăшша парăр, эрех ĕçсе укçа пĕтериччен вĕсене тутлă та усăллă апат-çимĕç туянса савăнтарăр. Пур çыннăн та йывăр самантсем пулаççĕ, анчах та вĕсене тивĕçлĕ чăтса ирттермелле, çутă пуласлăха ĕненмелле, малаллах утмалла.

**Ольга ПАВЛОВА,**
**ЧПУ студентки.**

## Кашни куна усăллă ирттереççĕ

***Ваçкасси ялĕнче пурăнакан Анжелика Михайловнăпа Леонид Иванович Егоровсем пĕрлешни август уйăхĕнче 14 çул çитет ĕнтĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн йăлари ыйтусем çĕкленӳлĕхе путараççĕ теççĕ. Анчах та Егоровсен çемйинче ку пачах та апла мар. Пурăнса ирттерекен кашни кунах çемье пуçĕ те, унăн мăшăрĕ те интереслĕ, ачисемшĕн асра юлмалла ирттерме тăрăшаççĕ. Шкула çӳрекен Еленăпа Евгений те юратнă ашшĕпе амăшĕн хӳтлĕхне туйса, тăрăшулăхне курса ӳсеççĕ. Çавăнпах çемьери пур ĕçе те хаваспах хутшăнаççĕ вĕсем: асламăшне – Клавдия Мироновнăна вак-тĕвекпе пулăшнинчен пуçласа хуçалăхри пысăк ĕçсем таранах. Канура та çемье яланах пĕрле.***

***Н. НИКОЛАЕВА.***



## Ăнăçу хăвăрт килмест

Ачан яланах мĕн те пулин çĕннине пĕлес туртăм вăйлă. Шкула кайма хатĕрленекен е шкула тин кăна кайма пуçланă ачаран тӳрех пĕтĕмпех ан ыйтăр. Эсир ыйтни хăвăрăн ачан аталанăвĕпе килĕшсе тăмалла. Тирпейлĕх, тăрăшулăх, яваплăх – çак енсем ачан пĕр самантра аталанаймаççĕ. Ача хăйĕн ĕçне йĕркелеме çеç вĕренет-ха, çавăнпа та ăна аслисем енчен чи малтанах пулăшу, сĕнӳсем кирлĕ. Апла ашшĕ-амăшĕн тĕп задачи – чăтăмлă пулса ачана пулăшасси.

Ача та йăнăшма пултарать, çакна тĕпе хумалла. Апла пулсан ăна йăнăшма пултарассинчен хăрама вĕрентмелле мар. Ача мĕн те пулин тĕрĕс пурнăçлаймарĕ пулсан ăна ан вăрçăр. Унсăрăн вăл чăнах та йăнăшассинчен хăрама пуçлать, хăй нимĕн те тума пултараймассине те ĕненĕ. Ачан йăнăшне пĕрле тӳрлетĕр. Унăн кашни ăнăçлă утăмнех хавхалантарăр, мухтаса илме ан манăр.

Ачашăн ан шухăшлăр. Ăна ĕç хушсан тӳрех çав ĕçе ан хутшăнăр. Вăл хăй тĕллĕн ĕçе пурнăçлаймассине шутлама пултарать. Эсир пĕрмай пулăшса тăрсан ача унăн шухăшлавĕ пачах та кирлĕ маррине туйма пуçлĕ.

Малтанхи йывăрлăхсене куçран ан вĕçертĕр. Ачан кирек епле йывăрлăхне те асăрхама тăрăшăр. Кирлĕ пулсан специалистсемпе те канашлăр. Сывлăх енĕпе ыйтусем сиксе тухаççĕ пулсан вĕсене çийĕнчех татса парăр. Мĕншĕн тесен шкулти йывăрлăхсене çирĕп сывлăхлă ача çеç парăнтарать. Психологран е логопедран канашсем ыйтма ан вăтанăр.

Уявсем те йĕркелесе парăр ачăра. Вĕсен пурнăçĕнче те пĕчĕк уявсем кирлĕ. Унăн ăнăçăвĕсем хăйсемех уяв хăçан иртме пултарассине систерĕç. Ку ачан кăмăлне хăпартса ăна хавхалантарĕ.

Шкула каясси – ачашăн йывăр тапхăрсенчен пĕри. Апла ашшĕ-амăшĕн те питĕ сисĕмлĕ, тимлĕ пулмалла. Çемьере яланах ырă хутшăнусем, пĕрпĕрне хисеплени кирлĕ. Çак вăхăтра ашшĕ-амăшĕн тĕслĕхĕ ачашăн чи витĕмли пулса тăрать. Ачана хăй тĕллĕн ĕçлеме, ĕçе йĕркелеме тата ăна яваплăхпа пурнăçлама вĕрентмелле. Çак енсем шăпах пĕрремĕш класра вĕренекенсен çителĕксĕр. Сăмахран, тăхтав вăхăтĕнче ачан тепĕр урока хатĕрленмелле, тула кайса килмелле тата канма та ĕлкĕрмелле. Пĕтĕмпех йĕркепе пулса пырать. Апла пулсан килте та ачан хăйĕн вырăнне пуçтармалла, сĕтел çинчи япаласемпе хатĕрсене те тирпейлĕ тытмалла, хăвăрт тата тирпейлĕ апатланма та вĕренмелле. Çипуça тирпейлĕ хума, ăна çанталăка кура тăхăнма вĕрентмелле, хуçалăхри ĕçсене хутшăнтармалла. Çапла вара шкула кайма пуçласан та йывăрлăхсем ытла йывăр туйăнмĕç.

**Л. ВЕРХОВЦЕВА,**
**психолог.**

## Юратупа шанчăклăха упранăшăн – орден та, медаль те

***Паян район администрацийĕн ырă йăласен залĕнче Пĕтĕм Раççейри çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ ячĕпе уяв мероприятийĕ иртет. Кун çинчен тĕплĕнрех каласа пама район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхне А.Е. АНДРЕЕВĂНА ыйтрăмăр.***

– Кунта 10 сехет тĕлне районти ятлă-сумлă, пĕрле чылай çул пурăнакан çемьесене те, пурнăç çулĕпе тин кăна пĕрле утма пуçланисене те йыхравларăмăр, – пĕлтерет район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ А. Андреева. – Паллах район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та çемьесене саламлать, ытти специалистсем те çавра сĕтел тавра пухăнĕç.

**– Калаçу мĕн пирки пулмалла?**

– Хамăрăн калаçăва эпир «Çемье – пĕтĕм пуçламăшĕн пуçламăшĕ» ятпа ирттерес терĕмĕр. Çамрăк çемьесенче куллен сиксе тухакан ыйтусем тавра та калаçăпăр. Ачасен хӳтлĕхĕ те çавра сĕтел хушшинче сӳтсе явмалли тепĕр тĕп ыйту пулĕ.

**– Районта кăçал ачасен прависен уполномоченнăйĕ пулма Н.Г. Ванеркина шанса пачĕç. Апла çак уяв мероприятийĕ унсăр иртмест пулĕ?**

– Çапла. «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» уçă акционерсен пĕрлешĕвĕн ертӳçипе Н.Г. Ванеркинпа тĕл пулăпăр. Тĕрлĕ ыйтусем пăхса тухăпăр. Унччен маларах вара çемьесем Яракри Культура çуртне çитсе курĕç, унта уява епле йĕркеленипе паллашĕç. Интереслĕ мероприяти Каршлăхра вĕçленĕ.

**– Районти хӳтлĕх пайĕ пĕлтернĕ тăрăх июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне пирĕн районта 50 тата ытларах çул пĕрле пурăнакан мăшăрсем 200 ытла, вĕсен шутĕнчен 60 е ытларах çул пĕрле пурăнакансем 10 ытла. Вĕсенчен хăшĕсем кăçал «Юратупа шанчăклăхшăн» медале тивĕçрĕç-ши?**

– Пирĕн районта ятлă-сумлă, хисепе тивĕçнĕ мăшăрсем чăнах та питĕ нумай. Кăçал вара Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Римма Михайловнăпа Алексей Петрович Петровсен, Хорнуй ял тăрăхĕнчи Раиса Романовнăпа Ефрем Никифорович Футляровсен тата Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Тамара Николаевнăпа Иван Димитриевич Вязовсен çемйисем тивĕçрĕç. Çак медаль вăл обществăлла награда. Ăна Раççей Федерацийĕнче Çемье тата юрату кунĕн уявне ирттернĕ чух пама йĕркелӳ комитечĕ йышăннă. Медальпе 25 çултан кая мар пĕрле пурăнакан, ят-сум çĕнсе илнĕ, ачисене тĕрĕс-тĕкел пăхса ура çине тăратнă мăшăрсене чыслаççĕ.

«Юратупа шанчăклăхшăн» орден та пур. Ăна Москакасси ял тăрăхĕнчи Живойкинсем тивĕçрĕç. Орденпа вĕсене Шупашкарта наградăлаççĕ. Каламалла, республикăра çакнашкал ордена пĕрле 50 е ытларах çул пурăнакан пурĕ те 15 çемье кăна тивĕçнĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Ачасем те, хĕрарăмсем те хăйсене юратманнине туяççĕ

***Владимира (ятне улăштарнă) вунă çул ытла пĕлетĕп. Йĕркеллĕ арçын. Пирус туртмасть, эрех ĕçмест. Ĕçрен пăрăнмасть. Хĕрарăм ĕмĕчĕ темелле пуль ăна. Апла пулин те Владимир паян пĕчченех пурăнать. Мăшăрĕнчен уйрăлнă. Унчченхи арăмĕ Мускавра ĕçлет. Тăтăшах килкелесе каять тăван ене. Икĕ ачи те ашшĕпе пĕрле мар. Мĕншĕн çапла пулса тухнă-ха?..***

Владимир аппăшĕпе пĕрле ялти çемьере ӳснĕ. Ашшĕпе амăшĕ те пулнă вĕсен. Анчах ашшĕ... Кутăн арçын пулнă вăл. Кашни ялтах пур ун пеккисем. Хăйĕн арăмне, ачи-пăчине пăхăнтарасси пулнă çак арçыннăн пурнăçри тĕллевĕ. Ĕмĕр тăршшĕпех вăл вĕсене пусмăрласа пурăннă.

Амăшĕн ачисене пăхма вăхăт та пулман. Ара ашшĕне юрамалла. Ун тавра ташласа тăмалла. Çуса тăхăнтартмалла, пĕçерсе çитермелле... Кирек хăш самантра та ун курнăçне тивĕçтермелле. Лешĕ вара... Ĕçлес килет – ĕçлет, канас килет – канать. Урă кунĕ те сайра. Арăмĕ çине алă çĕклеме те вăтанман. Арăмне вăл хăйĕн тарçи вырăнне йышăннă. Арăмне çеç-и, ачисене те.

Владимир пурнăçĕнче ытларах хура кунсем пулнине вулакан ăнланчĕ ĕнтĕ. Çапла ачалăх савăнăçсăр иртнĕ.

Ашшĕ ачана тăшманăнах туйăннă. Çак курайманлăх вара амăшĕ çине те куçнă. Ача чунĕнче çуралнă курайманлăх ĕмĕрлĕхех шала кĕрсе пытаннă.

Владимир ӳссе çитĕнсен професси те илнĕ, çемье те çавăрнă. Ялти ытти вуншар çемьерен нимĕнпе те уйрăлса тăман вĕсем.

Анчах çемье арканнă. Çемье пуçĕ эрехпе иртĕхнипе мар. Владимира эпĕ нихăçан та хĕрĕнкĕ пулнине те курман. Ĕçлеме те ӳркенмест вăл. Кăмăлĕ те çемçе унăн. Анчах...

– Эпĕ хĕрарăмсене юратма пĕлместĕп пулмалла, тен, юратмастăп та, – салхуллăн калаçать Владимир, – вĕсем вара хăйсене юратманнине сисеççĕ.

Владимир хăйĕн телейсĕр ачалăхне асра тытнăран ачисемпе çыхăну тытма тăрăшать, пулăшма та майне шырать.

Ăслă çынсем каланă тăрăх ачашăн чи кирли – юрату. Ача-пăчана уйрăмах пĕчĕк чухне юратса пăхмалла. Пуçран шăлма та, ырă сăмахпа хавхалантарма та манмалла мар. Ӳссен епле çын пуласси ачалăхран çав тери нумай килет теççĕ специалистсем. Мĕн акатăн – çавă шăтать тесе ахальтен каламан пуль ваттисем.

Ача чунĕ питĕ черчен. Ăна амантма нумай та кирлĕ мар. Владимир чунне ашшĕ «акнă» курайманлăх авă паян кун та хăй çинчен аса илтерет.

**А. ТИМОФЕЕВ.**

# Асăрханăр, шăрăх!

Çанталăк вăрах вăхăт питĕ шăрăх тăрать. Çакнашкал çанталăкра сехечĕ-сехечĕпех хĕртсе пăхакан хĕвел айĕнче çӳреме е тата пăчă пӳлĕмсенче ларма хушмаççĕ специалистсем. Уйрăмах çителĕклĕ шыв ĕçме май çук, хăвăр синтетика материалĕсенчен çĕленĕ тумтир тăхăннă пулсан, ӳте хĕвел пайăркисенчен хӳтĕлеме пулăшакан крем сĕрмен, шĕлепке-тутăрсăр пулсан тата ытти те.

Пуç ыратма пуçлани, вăй пĕтсе килни, ăш пăтранни – çаксем пĕтĕмпех хĕвел «çапса ӳкернин» малтанхи паллисем. Çакăн çине алă султăр пулсан хăвăра татах та япăхрах туйма пуçлатăр, ӳт-пӳ температури те 40 градуса çитсе ытларах та хăпарса кайма пултарать. Çапла вара ӳт вĕриленсе каять, типĕ пулать, йывăртарах лару-тăрусенче çын тăн çухатса ӳкме те пултарать.

Мĕн тумалла-ха кун пек чух?

Малтанах вăрипе аптăранă çынна сулхăн вырăна илсе çитермелле, пуçĕ çине шывпа йĕпетнĕ татăк хумалла, шыв ĕçтермелле (сиввине мар!). Курăксенчен вĕретнĕ чей е минераллă шыв та ĕçтерме юрать. Çынна пĕтĕмпех нӳрĕ татăкпа чĕркеме май пур пулсан çапла тумалла та. Вăл тăнне çухатнă пулсан аммиакпа йĕпетнĕ ватăна сăмси патĕнче енчен енне сулласа илмелле. Пулăшас тенĕ чух аптăранă çыннăн пуçĕ айне ал айĕнчи япаласемпе усă курса минтер туса хумалла. Çын пачах та сывламасть тата унăн чĕре таппине сисместĕр пулсан тӳрех искусственнăй майпа сывлаттармалла, чĕре тĕлĕнчи ӳте сăтăрса çемĕçтермелле. Паллах, васкавлă пулăшу чĕнмелле.

Хĕвел е ăшă антăратни ытларах ачасен тата ватă çынсен пулма пултарать. Çавăнпа та шăрăхра урама тухма ан васкăр. Мăнтăрккарах çынсен, чĕре тымарĕсен тата эндокринлă чирсемпе аптăракансен, эрех ĕçекенсен çакăн пирки чи малтан шутламалла.

Урама тухнă чухне шĕлепке-тутăрсăр тухмалла мар, е хăвăрпа пĕрле зонт илмелле. Май пур пулсан 10 сехетрен пуçласа 15 сехетчен пӳлĕмрех пулма тăрăшăр. Специалистсем шăрăх кунсенче кăнтăр апатне чакарма сĕнеççĕ, уйрăмах çуллă апат пулсан. Ытларах çиессине вара каçхи апата хăвармалла. Кунĕпех час-час шыв ĕçмелле (сиввине мар!), симĕс чей е минераллă шыв пулсан аванрах, курăксенчен вĕретнĕ чей те усăллăрах. Шăрăх кунсенче алкоголь продукцине ĕçме юрамасть.

**Шупашкар хулинчи сывлăх сыхлавĕн управленийĕ.**

# Ĕçре яланах ăсталăх кирлĕ

**Сывлăх сыхлавĕ**

***Районти медицина ĕçченĕсем хăйсен ĕçне ответлăхпа тата пысăк яваплăхпа пурнăçлаççĕ. Юлашки вăхăтра уйрăмах чирсене асăрхаттарассине нумай тимлеççĕ. Çакна туса пыма вара пысăк квалификациллĕ ĕçченсем кирли каламасăрах паллă. Медицина сестрисем те хăйсен квалификацине ӳстерсе çынсене тивĕçлĕ пулăшу пама пултарни пысăк вырăн йышăнать.***

Хальхи вăхăтра Муркашри тĕп больницăра вăтам медицина персоналĕ пĕтĕмпе 214 çын. Пур специалист та сертификатпа ĕçлет. Вĕсем хушшинче 2 е ытларах сертификатлисем 40 специалист. Вăтам персоналтан 90 çын аслă категориллĕ, 50 çын 1 категориллĕ, 9 çын 2 категориллĕ специалист.

Иртнĕ эрнере акă Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕ В. Данилов «Сестра ĕçне йĕркелесси» енпе хăйсен пĕлĕвне çӳллĕрех шая хăпартса таранлатнă специалистсене алла диплом илнĕ ятпа саламларĕ. Кусем вĕсем: Т. Васильева аслă акушер, И. Казакова аслă медицина сестри. Çемье медицини енĕпе пĕлĕве анлăлатса Т. Трофимова (Ярапайкассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕ) тата Г. Алексеева участокри медицина сестри дипломсем илнĕ.

Владислав Григорьевич специалистсене саламланипе пĕрлех вĕсен тĕп тĕллевĕсене те тепĕр хут аса илтерчĕ, ĕçре çĕнĕ технологисене, кирлĕ информацие вырăнлă усă курса тăрăшмаллине каларĕ.

**М. ШАРАПОВА,**
**тĕп медицина сестри.**

# Таса та тирпейлĕ пулмалла

**Врач канашĕ**

***Юлашки вăхăтра шкулсемпе ача сачĕсенче педикулез хăй пирки аса илтерме пуçларĕ. Çакна май ашшĕ-амăшĕн те, учительсемпе воспитательсен те ун çинчен пĕлмелли сахал мар.***

Педикулез пĕтĕм тĕнчипех сарăлнă. Вăл пур чухне вара шатраллă тиф пуçăнма пултаракан хăрушлăх тăрать.

Çулсеренех Раççей Федерацийĕнче педикулезпа 100 пин çынна яхăн аптăрать, вĕсенчен 75 проценчĕ вара ача сачĕсемпе шкулсене çӳрекенсем. Цивилизациллĕ тапхăрта пурăнатпăр ĕнтĕ, çапах та тумтир çинчи пыйтăсен паян та пур-ха. Пыйтăшăрка ернипе аптракансем ытларах 14 çулченхи ачасем. 7-12 çулхисем уйрăмах çуллахи вăхăтра, ашшĕ-амăшĕн çирĕп контролĕнчен тухнипе, хăйсен тантăшĕсенченех (вĕсен çемйисенче пыйтă пур пулсан паллах) пыйтă ертме пултараççĕ. Аслисем тата шыва кĕрсен те çак пĕчĕк чĕр чунсем лекме пултарнине калаççĕ. Ку шухăш тĕрĕс мар.

Педикулеза сарăлма парас мар тата унран сыхланас тĕлĕшпе санитарипе гигиена требованийĕсемпе килĕшӳллĕн шкулсенче çулталăкра 4 хутран сахал мар, ача сачĕсенче кашни эрнерех медицина ĕçченĕсем ятарлă тĕрĕслев ирттереççĕ. Ачасем хушшинче çак чире тупса палăртрĕç пулсан вĕсене çийĕнчех сиплеме килĕсене ямалла.

Педикулез пирки каланă чух шатраллă тиф пирки каламасăр иртме çук, вăл тахçантанпах регистрациленмест пулин те. Анчах та çак инфекцие асăрхаттарассине тимлемелле. Мĕншĕн тесен вăл хăйĕн актуаллăхне çухатмасть-ха. Шатраллă тифа пуçараканĕсем шăпах çын пыйтисем. Вĕсем çыртнă вырăнсене çӳç туранă чух шăйăрса, амантса хăварсан çав вырăнсем урлă пыйтăн риккетсийĕ (шатраллă тифа пуçараканни) ӳт ăшне лекет.

Педикулеза хирĕç кĕрешме паянхи кун тĕрлĕ препаратпа усă курма пулать: хими хутăшĕсемпе е медицинăри ытти мелсемпе. Çӳç çинчи пыйтăсемпе шăркасене пĕтерес тесен çӳçе кĕскерех касса вĕтĕ турапа тасатма та пулать, арçын ачасен çӳçне, сăмахран, пĕтĕмпех касса илме те пулать. Çӳçе çăра вĕтĕ шăллă турапа турас умĕн çумалла, столовăй уксусĕн хутăшĕпе чухсе илмелле. Тура шăлĕсем хушшине уксуспа йĕпетнĕ ватăран хатĕрленĕ çинçе жгут е çип вырнаçтармалла. Каснă çӳçе, турасан тухнă шăрка-пыйтăна клеенка çине пухса пымалла, çунтарса ямалла.

Кĕлетке çинчи пыйтăна пĕтерме вĕри шывпа супăньпе çăвăнмалла, кирлĕ пулсан çӳçе хырса пăрахмалла, çи-пуçа улăштармалла. Ятарлă препаратсемпе те усă курма юрать. Аптекăсенче ятарлă шампуньсем те сутаççĕ: «Ниттифор», «Перфолон», «Медифокс». Пуçа е кĕлеткене 7-10 кунтан тепĕр хут тасатма юрать. Тăхăнса çӳренĕ çи-пуçпа вырăн таврашне те, паллах, лайăх тасатса улăштармалла.

Хамăра таса тытни – кĕлетке те, çӳç те яланах таса пулни, тăтăш мунчара çăвăнни тата тумтире вăхăтра улăштарни – çакă пĕтĕмпех педикулезран, апла пулсан шатраллă тифран сыхланма пулăшать.

**Г. СОКОЛОВА,**
**Муркашри тĕп больницăри эпидемиолог врачĕ.**

# Чрезвычайлă лару-тăру

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

**Чăваш Республикин гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитетне, Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствине чрезвычайлă лару-тăрăва пула тухнă тăкаксене саплаштармалли мероприятисен планне туса хатĕрлеме сĕннĕ. Ответлă органсен кая юлмасăр ял хуçалăх продукцине туса илекенсене тата агропромышленность комплексĕн организацийĕсене патшалăх енчен, вăл шутра Чăваш Республикин бюджечĕ шучĕпе пулăшассипе сĕнӳсем хатĕрлемелле.**

**Кунпа пĕрлех ял хуçалăх продукцине туса илекенсене муниципалитетсем шайĕнче те пулăшу кӳме пăхса хунă.**

**Çавна та палăртса хăвармалла. Чрезвычайлă лару-тăру режимне Атăл тăрăхĕнчи федераллă округăн 8 регионĕнче палăртнă.**

**Районта**

**Çанталăк нумай вăхăт шăрăх тăнине пула район территорийĕнче тăпрари нӳрĕк сахалланса юлчĕ. Ку вăл тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсем чечеке ларнă тапхăрпа пĕр килчĕ. Çĕр улми туни 10–15 сантиметртан ытла мар, вăл та саралнă. Улмасем тытăнмаççĕ. Кукуруза аталанаймасть, пĕтет. Курăксем типсе ларчĕç. Çулмалли курăк çук. Тымар çимĕçсем тата купăста типсе лараççĕ.**

**Районĕпе çанталăк типĕ тăнине пула урпа 2911 гектар çинче, çурхи тулă 2946 гектар çинче, сĕлĕ 405 гектар çинче, пăрçа 63 гектар çинче, нумай çул ӳсекен курăксем 2183 гектар çинче, пĕр çул ӳсекен курăксем 433 гектар çинче, çĕр улми 776 гектар çинче, кукуруза 50 гектар çинче, пахча çимĕç 18 гектар çинче пĕтнĕ. Районĕпе типĕ çанталăка пула кӳнĕ тăкак 195 миллион ытла тенкĕпе танлашать.**

**Çавна май район администрацийĕн пуçлăхĕ июлĕн 5-мĕшĕнчен тытăнса районти территорийĕнче чрезвычайлă лару-тăру туса хума йышăннă. Кун пирки 2010 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче 511 № йышăну тунă. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, организацисемпе учрежденисен тата районти службăсен ертӳçисене çапла сĕннĕ:**

- **тавралăх енĕпе сыхлав мероприятийĕсене ӳстермелле;**
- **чрезвычайлă лару-тăру пулассипе çыхăннă пулăмсене пăхса тăмалла;**
- **районти ял тăрăхĕсен, организацисен тата учрежденисен ертӳçисен талăкĕпех дежурство тăрассине йĕркелемелле;**
- **чрезвычайлă лару-тăру пулассине асăрхаттарассипе тата вăл пулас пулсан инкексене сирессипе оперативлă мерăсем йышăнмалла;**
- **чрезвычайлă лару-тăрăва асăрхаттарассипе тата вĕсене пĕтерессипе ĕç планĕсене палăртмалла;**
- **çыхăнупа пĕтерӳ системине хатĕрлесе çитермелле;**
- **ятарлă йышăну пуличчен Муркаш районĕн территорийĕнчи вăрмансене кĕме юрамасть, вĕсен территорийĕсене транспорт хатĕрĕпе кĕрес пулсан, Малиновка тата Ильинка лесничествисемпе калаçса татăлмалла.**
- **районти организацисен, учрежденисен ертӳçисен оперативлă дежурнăй службисемпе çыхăнса ĕçлемелле. Тел.: 01 (62-7-34) тата «112», 02 (62-6-67). Район администрацийĕнчи телефон: 62-2-59.**

**Спорт афиши**

## Мини-футбола васкăр!

Муркаш районĕнчи предприятисемпе организацисен, учрежденисемпе ял тăрăхĕсен командисен хушшинче футболла вылясси ăмăрту ирттессине пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. Çак йĕркене пысăках мар улшăну кĕртнĕ: командăсем футбол вырăнне мини-футболла выляççĕ.

Паян, июлĕн 7-мĕшĕнче, шăпа янă тăрăх виçĕ вырăнта – «Оринин», «Тивĕш» тата «Передовик» командăсен хăйсем патĕнче хăнасене йышăнаççĕ. Вăйăсем 19 сехетре пуçланаççĕ.

**Паллашу кĕтесĕ**

## Юлташ тупасшăн

Эрех ĕçмен, пирус туртман арçын ватлăх кунĕсенче пĕрле шăкăл-шăкăл калаçса пурăнма юлташ тупасшăн: 65-70 çулсенчи йĕркеллĕ те тирпейлĕ хĕрарăма. Эрех ĕçекеннисен шăнкăравламалла та мар. Тел.: 60-1-65.

**Асатма пулăшнăшăн**

## Тав тăватпăр

Юратнă мăшăра, аттене – Çĕлеменкасси ялĕнче пурăннă Сергей Дмитриевич Кошкина юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, çак пысăк хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн тăвансене, хурăнташсене, тус-юлташсене, ял-йыша, Афган салтакĕсенсовечĕн ушкăнне, «Шуçăм» юрăпа ташă ансамбль коллективне, ял тăрăхĕн администрацине, П.Т. Терентьев предпринимателе, кӳршĕсене чĕререн тав тăватпăр.

**Кошкинсен çемйи.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Архитектурно-строительное проектирование, систем электро-, водо-, газоснабжения. Составление смет. Свид. СРО.**
***ООО «Интертехсервис». Моргауши, ул. Мира, 9. Тел.: 62-6-03, 8-903-345-75-76.***

**Бетон, раствор любых марок. Песок, гравмасса, щебень, ЖБИ, асфальт. Организация доставки. Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-66-88-778, 8-927-668-84-40. 34-38.**

***

**Продаю однокомнатную квартиру по ул. Парковая с. Моргауши, на втором этаже трехэтажного кирпичного дома общей площадью 36,5 кв. м. Цена договорная. Тел.: 8-927-666-25-01, 8-952-025-14-97.**

***

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 4-5.**

***

**В кафе ООО «Заря» (Автомиг) требуются повар и официантка. Тел.: 8-903-066-20-73.**

***

**Июль уйăхĕнче тăваттăмĕш пăруламалли хура ĕне сутатпăр. Тел.: 68-3-05, 8-919-666-55-77.**

***

**Продаем торф, навоз, грунт, ОПГС, песок, щебень, асфальт с доставкой в короткие сроки. Оказываем автоуслуги. Тел.: 44-22-24, 8-905-343-91-07. 8-9.**

***

**Продается двухкомнатная мебелированная квартира площадью 53 кв. м. в с. Б. Сундырь, ул. Советская, д. 11. Тел.: 8-927-855-96-36, 29-18-07. 3-5.**





**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:230701:481, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:230701, для сельскохозяйственного производства, площадью 307941 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

Муркаш райпо коллективĕ кунта склад заведующийĕ пулса ĕçлекен Е.К. Леонтьевăн тăван пиччĕшĕ

**Борис Калистратович ЯРАВАЙКИН**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ

**Валентина Тихоновна ТРОФИМОВА**

пенсионерка, ĕç ветеранĕ вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.**
**Пичете pană 06.07.2010 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3871.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.